25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮЛЬ 15 ЮНКУН 163(6098) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МТС-сене тырпул пухса кĕртме хатĕрлесе çитерер

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсен чи ответлă тапхăрĕ çывхарса килет. Тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелле. Кăçал республикăри колхозсен уйхирĕсенче кĕртыррисем те, çуртыррисем те хÿхĕм ÿсеççĕ, пысăк тухăçлă тырпул пулассине шантараççĕ. Вĕсене вăхăтра, организованно пухса кĕртни ялхуçалăхĕн пĕтĕм ĕçне татса парать.

Сталин юлташ çапла каланă: «Тырăсене пухса кĕртес ĕç вăл пĕр сезонра туса ирттермелли ĕç; ăна вăхăтра туса ирттеретĕн—тупнатăн, кая юлатăн — çухататăн». Сталин юлташăн çак кăтартăвĕ халĕ уйрăмах паха кăтарту пулса тăрать. Çĕршывпа фронт ялхуçалăхĕнчи работниксене апат-çимĕç продукчĕсемпе чĕртавар ытларах та ытларах туса пама хушаççĕ. Вăрçă кунĕсенче кашни пăт тырă хаклă.

Колхозсен, машинно-тракторнăй станцисен, партипе совет организацийĕсемпе МТС политотделĕсен çак пысăк ĕçре ответлăха туйса ĕçлемелле, колхозниксемпе колхозницăсен пĕтĕм массине тырпула пухса кĕртес ĕçе илсе тухмалла, тырпула пухса кĕртес ĕçе кăçал нихăçанхинчен те лайăх туса ирттермелле.

Тырăсене пухса кĕртес ĕçре кăçал пирĕн машинно-тракторнăй станцисенчи, колхозсенчи машинăсем пурте пĕр чарăнусăр ĕçлемелле. Вĕсен вăйĕпе туллин усă курас пулать. Çакăн пек пултăр тесен, комбайнсене тата колхозсенчи мĕнпур пек машинăсене пурне те юсаса ĕçе юрăхлă тăвасси — паян кун тумалли ĕç. Машинăсене юсас ĕçе эпир тесех вăраха яма пултараймастпăр, ку ĕç кая юлса пыни — тырăсене пухса кĕртес ĕçе кая хăварать.

Кăтартса панă тăрăх, пирĕн республикăри МТС-сем комбайнсене юсас ĕçе июлĕн 10-мĕш тĕлне вĕçлемеллеччĕ. Анчах та Хĕрлĕ Чутай тата Шупашкар районĕсенчи машинно-тракторнăй станцисем çеç комбайнсене юсас ĕçе правительство кăтартса панă срокра вĕçлерĕç. Ытти районсенчи МТС-сем комбайнсене юсаса пĕтермен-ха. Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Етĕрне МТС-сем комбайнсене юсас ĕçре уйрăмах япăх ĕçлеççĕ. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ 8 комбайнран 3-ĕшне çеç юсанă, Сĕнтĕр районĕ юсамалли 12 комбайнран 3 комбайна çеç юсанă. МТС директорĕсемпе старши механиксенканашлăвĕнче Етĕрне МТС-ĕн директорĕ Щетинин юлташ комбайнсене правительство кăтартса панă срок тĕлне юсаса çитерме сăмах пачĕ. Анчах та Етĕрне МТС-ĕ 8 комбайнран июлĕн 10-мĕш тĕлне мĕнпурĕ те 3 комбайна çеç юсанă. Улатăр МТС-ĕ юсама кирлĕ 22 комбайнран 4-шне çеç юсанă.

Çак çулте асăннă МТС-сем комбайнсене юсас ĕçре хăйсем кая юлса пынине комбайнсене юсама запаслă чаçсем çитменнипе ăнлантарса параççĕ. Хăшпĕр МТС-сен директорĕсем çак сиенлĕ йăларан халĕ те уйăрăлса çитмен-ха. Улатăр МТС-ĕ тавра промышленность предприятийĕсем пĕрре çеç мар, машинăсене юсакан мастерской та юнашарах темелле. Анчах та, МТС руководителĕсен тимсĕрлĕхне пула, вĕсем ĕçре пуçарулăх кăтартманнине пула, кунта комбайнсене юсас ĕç питех те кая юлса пырать. Комбайнсене çак кунсенчех юсаса çитермелле, машинно-тракторнăй станцисен ку ĕçе пĕтĕм вăя, пуçарулăха хумалла.

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ комбайнсене юсас ĕçе срокченех тата паха юсарĕ. Çакăн хыççăнах МТС комбайнерĕсем комбайнсем çумне улăма купаласа пымалли, тырă пĕрчисене пуçтарса пымалли тата выртса пулнă тырра вырмалли приспособленисем тума тытăннă. Паянхи куна вĕсем виçĕ комбайн çумне улăма купаласа пăрахса хăваракан, кашни комбайн çумнех тырă пĕрчисене пуçтарса пыракан приспособленисем туса лартнă. Районри колхозсем комбайнсемпе пухма уйăрнă участоксенчи тырăсене çумкурăкĕсенчен тепĕр хут тасатса тухнă.

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн примерĕ тăрăх комбайнсем çумне приспособленисем туса лартас ĕçе пур МТС-сен те халех тытăнмалла. Паянхи куна чылай МТС-сем ку ĕçе тытăнман-ха.

Республикăри 368 комбайнран июлĕн 10-мĕш тĕлне 236 комбайна юсанă. Çавăн пекех молотилкăсене юсас ĕç те юлсарах пырать, вĕсене çурринчен ытларах çеç юсанă.

Уйрăмах колхозсенчи ялхуçалăх машинисене, транспорт инвентарĕсемпе вак ĕç хатĕрĕсене юсас, çĕнĕрен тăвас ĕç хăшпĕр районсенче çителĕксĕр пулса пырать. Июлĕн 10-мĕш тĕлне чылай колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсас ĕç вăраххăн пулса пыни палăрать. Республикăра тырă вырмалли машинăсем пурĕ 2.472 пулсан, вĕсенчен 1.278-шне çеç юсаса лартнă. Çавăн пекех авăн çапмалли тата тырă тасатмалли машинăсене те çуррине кăна юсаса çитернĕ. Ку тĕлĕшпе колхозсенче ĕçе тĕпренех хăвăртлатмалла. МТС-сен колхозсене тырă тасатмалли машинăсене юсас ĕçре те пысăк пулăшу памалла.

Комбайнсене юсас ĕçе хăвăртрах вĕçлемелле. Çавăнпа пĕрлех МТС ĕçлекен колхозсенче комбайнпа вырмалли участоксене уйăрса çирĕплетмелле. Вăл участоксемпе комбайнерсен малтанах паллашмалла. Комбайнсене çирĕп юсаса ĕç вырăнĕсене кăлармалла, колхозсенче комбайн патĕнче ĕçлекен çынсене уйăрса çирĕплетмелле. Ку тĕлĕшпе те халĕ чылай МТС-сенче нимех те туман-ха.

Республикăри машинно-тракторнăй станцисем кăçал кадрсем хатĕрлес ĕçе чылаях лайăх туса пыраççĕ. Халĕ комбайнерсем, вĕсен помощникĕсем пур МТС-сенче те çителĕклĕ. Вĕсене уйăрса çирĕплетсе хунă. Пĕр Пăрачкав МТС-ĕнче кăна 4 комбайнер тата пĕр помощник çитмест. Комбайнерсен йышĕнче комбайнпа 3—4 çул хушши ĕçлекен опытлă комбайнерсем 174 çын. Ыттисем çĕнĕ çынсем. Вĕсем комбайн çине кăçал малтанхи хут лараççĕ. Çакă ĕнтĕ МТС политотделĕсем умне çĕнĕ кадрсене ĕçре тăтăшах пулăшса тăрас задачăна лартать.

Тырăсене пухса кĕме тытăнас вăхăт çывхарса килет пулсан та, чылай МТС-сем уборка вăхăтĕнче ĕçлеме горючи тата сĕрмелли япаласем кирлĕ таран хатĕрлемен-ха. Главнефтесбыт горючипе сĕрмелли япаласем турттарса килес тĕлĕшпе начар ĕçленине пула, МТС-сем горючипе сĕрмелли япаласене çителĕклĕ таран турттарса хума пултараймаççĕ. Елчĕк районĕнчи колхозсенче кăçал 26 трактор ĕçлемелле. Тырăсене пухса кĕрес ĕçсене тума вĕсене çĕршер центнер бензин, краççин кирлĕ пулать. Паянхи куна МТС-ра уборкăра кирлĕ горючийĕн 15 процентчĕ çеç пур. Çавăн пекех Пăрачкав районĕнче те. Горючи ытăвне халех татса памалла.

Ĕнер хаçатсенче ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси» çинчен йышăннă постановлени пичетленсе тухрĕ. Постановлени партипе совет организацийĕсене, колхозсене, МТС-сен директорĕсене, МТС политотделĕсен начальникĕсене 1942 çулти тырпулсене пухса кĕртес тата государство валли ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕççене большевикла туса ирттерме чĕнет. Çак постановление кашни колхозникпа колхозница, кашни бригадăпа звено, кашни трактористпа комбайнер патне çитерсе ăнлантарса памалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 13-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Воронеж районне татса кĕнĕ фашистла войскăсен группировкине хирĕç хаяррăн çапăçнă.

Богучартан кăнтăртарах районра противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç çаплах вăйлăн çапăçнă.

Лисичанскран хĕвелтухăçнерех вырăнта пирĕн войскăсем оборонăн çĕнĕ рубежĕсем патне йĕркеллĕн чакса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 26 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 115 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой артиллерин икĕ батарейине пусарса лартнă, портра 5 пысăк склада сирпĕнтерсе янă, пĕр транспорта тата нефть турттаракан суднăна путарнă, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче противника хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ. Ларутăру унта çаплах çивĕч тăрать-ха. Пирĕн танковăй чаçсемпе пехотнăй чаçсем тата артиллери противникăн атакисене сире-сире яраççĕ. Бобровник юлташăн танк экипажĕ пĕр çапăçура нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтернĕ, противникăн пĕр танкне, 3 орудине, 8 миномётне тата 10 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу çивĕчленсе кайнă вăхăтра Бобровник юлташ пирĕн пĕр йывăр танк çĕмĕрĕлнине асăрханă, вăл ун патне хăйĕн юлташĕсене пулăшма ыткăннă, çĕмĕрнĕ танка çапăçу хирĕнчен сĕтĕрсе кăларнă. Старши лейтенант Калгановăн танк экипажĕ тапăнса пыракан противника флангран пырса çапнă та танка хирĕç пемелли 3 оруди, 3 йывăр оруди тата 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Никовиков лейтенантăн танк экипажĕ çапăçура нимĕçсен 8 танкне çĕмĕрнĕ. А. Ялĕшĕн пынă çапăçусенче Сергеев лейтенантăн танксене хирĕç кĕрешекен батарейи нимĕçсен 6 танкне çĕмĕрнĕ тата 2 танкне çунтарса янă.

* * *

Богучартан кăнтăртарах районра противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç йывăр çапăçусем пыраççĕ. Пĕр участокра пирĕн часть противникăн темиçе атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 500 вилли ытла выртса юлнă. Противник çĕнĕ вăйсем илсе пынă. Оборонăллă вăйлă çапăçусем тунă хыççăн пирĕн часть çĕнĕ позици патне чакнă.

* * *

Лисичанск енче пирĕн войскăсем, командовани хушнă тăрăх, оборонăллă çĕнĕ рубеж патне йĕркеллĕн чакса пынă. Çăмăл куçса çÿрекен группăсемпе авиаци, пирĕн войскăсем чакнине хÿтĕлесе пыраканскерсем, противника чарса тăраççĕ, ăна çухатусем тÿстереççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 17 танкне, пехотăпа çар грузĕ турттарса пыракан 130 автомашинине, темиçе орудине тата темĕн чухлĕ пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕç пехоти, танксем пулăшса пынипе, пирĕн оборонăн малти хĕррине атакăланă. Гвардеец-минометчиксем гитлеровецсене çывăха янă та вĕсем çине вăйлăн пеме пуçланă. Нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 600 салтакпа офицер пĕтнĕ. Пирĕннисем нимĕçсен 2 танкне, миномечĕсен 2 батарейине, нумай пулемечĕсене тата боеприпассем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Богородецкий юлташ командир пулса ертсе пыракан летчиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, противникăн аэродромĕ çине вĕçсе кайса нимĕçсен 60 самолетне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Саевич юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири снайперсем икĕ кун хушшинче 25 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи Чумазовски ялсоветне кĕрекен ялсенчи çынсем гитлерла бандитсем çаратни тата калама çук тискер ĕçсем туни çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: гитлеровецсем Рига, Чумазово, Касьново, Приволье ялĕсене тата «Первое Мая» поселокне тустарса, çаратса пĕтернĕ. 298 килрен нимĕç бандичĕсем 292 киле çунтарса янă, 2 клуба, 2 шкула, армана, столовăя, тимĕрçĕ лаççине тата ытти хуралтăсене çĕмĕрсе, çунтарса янă. Нимĕçсем мирлĕ халăхран пĕтĕм продовольствие, мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке тата пурлăха тытса илнĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем нумай хресченсене асаплантарса тата персе вĕлернĕ, 160 арçынпа хĕрарăма Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайнă.

* * *

Югослави патриочĕсем нимĕçсемпе итальянец захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре çĕнĕ çитĕнÿ тунă. Партизансен отрячĕсем Боснипе Серби территорийĕсен пысăкрах пайне контрольлесе тăраççĕ. Италин пропаганди Итали çарĕ Югославире тÿсекен пысăк çухатусене урăх пытарса тăраймасть ĕнтĕ. Итали командованийĕн пĕчĕклетсе кăтартнă даннăйĕсем тăрăх та, июнь уйăхĕнче Балканра Италин салтакĕсемпе офицерĕсем 466 çын вилнĕ, 496 çын аманнă.

Июлĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче тата **Богучар** хулинчен кăнтăртарах вырăнта хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Пĕр ансăр участокра пысăк вăйсем пухса тăратса, противник Воронеж районне татса кĕнĕ. Пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Темиçе участокра йышлă танксен вăйлă çапăçăвĕсем пыраççĕ. Гварди капитанĕн Амелинăн танк экипажĕ нимĕçсен танкне вут тивертсе янă, миномётсен 2 батарейине тата танксене хирĕç пемелли пĕр орудие пĕтерсе тăкнă. Марченко юлташ ертсе пынă йывăр танкăн экипажĕ пулеметсемпе тупăран персе тата хăйĕн гусеницисемпе таптаса, нимĕçсен 60 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă тата миномётсен батарейине пĕтерсе тăкнă. Неписов лейтенантăн танк экипажĕ 10 оруди, 4 автомашина, 6 мотоцикл тата 100 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Белицкий юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри летчиксем юлашки 3 кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 40 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Богучартан кăнтăртарах районра пирĕн войскăсем противникăн наступлени туса пыракан войскисене хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ. Уйрăм участоксенче пирĕн танксен подразделенийĕсем гитлеровецсен çапăçуллă йĕркисем çине пыра-пыра тапăннă, пехота турттарса пыракан 40 автомашинăна яхăн, танксене пемелли 13 оруди тата 14 танк пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лопов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Калинин фрончĕ) 6 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна ытла тата противникăн 54 танкне пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче противник атакăна пехотăн 3 батальонне тата 42 танк кĕртсе янă. Пирĕн боецсем нимĕçсен атакине сирсе янă, 12 танк тата 1.700 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан Е. пункчĕ çывăхĕнче нимĕçсем сывлăшран десант антарнă. Парашютистсене нумайĕшне çĕр çине анса çитичченех пере-пере вĕлернĕ. Ыттисене çĕр çинче пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн штурмовой тата истребительнăй авиачаçсем противникăн 4 аэродромне пĕр вăхăтрах вăйлăн пырса çапнă. Совет авиацийĕ вĕçсе пырса тапăнассине противник кĕтмен. Пирĕн летчиксем 2 аэродром çинче 25 самолета çити тата пĕр ангара çунтарса янă, виççĕмĕш аэродром çинче 70 самолета яхăн, тăваттăмĕш аэродром çинче 18 самолета яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет Союзĕн Геройĕ Шинкаренко подполковник командир пулса ертсе пыракан 9 летчик-истребитель çĕр çинчи войскăсене сывлăшран хÿтĕлесе пынă чухне нимĕçсен 17 бомбардировщикне асăрханă, çав бомбардировщиксемпе пĕрле истребительсем йышлăн вĕçсе пынă. Противникăн вăйĕ йышлăрах пулнине пăхмасăрах, совет летчикĕсем тăшманăн самолечĕсене атакăланă, вĕсене çапăçăва кĕртсе янă. Шинкаренко подполковник тата старши лейтенант Зайцев кашнийĕ 2-шер самолет персе ÿкернĕ. Черепанов подполковникпа Вараксин капитан пĕрер «Мессершмитт» персе ÿкернĕ.

* * *

Гварди сержанчĕн Хлынцевăн орудиĕ расчечĕ патнелле противникăн танксен колонни çывхарса пынă. Хăйсен орудине усă позицие илсе тухса, артиллеристсем çав орудирен пеме тытăннă та нимĕçсен 3 танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ нимĕçсен горючи складне ăнăçлăн пырса тапăннă. Совет патриочĕсем складăн хуралне пĕтерсе тăкнă та 6 автоцистерна тата бензин нумай çунтарса янă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен вилнĕ фельдфебелĕн Альберт Лихтенбергăн записной кĕнекинчен уйрăм вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «Питĕ пысăк хĕнпе малалла куçса пыратпăр. Çухатусем калама çук пысăк. Нумай ротăсенче салтаксенчен 40—50 проценчĕ стройран тухнă. Вырăс летчикĕсем пĕрле вăйлăн пырса тапăннă чухне 600 çынна яхăн вилнĕ тата аманнă. Вилнисене пуçтармаççĕ—пуçтарма çын çук. Виле шăрши кăмăла пăсать. Салтаксем вараланса пĕтнĕ, тумтирсем çĕтĕлсе пĕтнĕ. Хĕçпăшалсене тата тĕрлĕ хатĕрсене çухатса пĕтернĕ. Çĕнĕ вырăнсенче мĕн те пулсан организацилеме тăрăшатпăр. Кунта чăхсем, çăмартасем, çу пур. Эпир мĕнпуррине пурне те çисе яратпăр. Хаклă япаласем тупма йывăртарах вара. Çынсем вĕсене пытарса хунă. Ĕнер Шульц унтер-офицерпа пĕрле темиçе çурта тасатса тухрăмăр...»

* * *

Месбьерс çывăхĕнче (Дания) Дани патриочĕсем вăйлă токлă электромагистрале темиçе тĕлте пăснă.

* * *

Альтеросен районĕнчи рудникра (Германия) вăйлă взрыв пулнă. Шахта çĕмĕрĕлнĕ. Ĕç йăлтах чарăнса ларнă.

Гитлерла командованин жуликла пĕлтерĕвĕ

Совет войскисене «çавăрса илни» тата «пĕтерсе тăкни» çинчен июлĕн 13-мĕшĕнче нимĕçсен фашистла çарĕн верховнăй командованийĕ каллех тепĕр жуликла суя «специальнăй пĕлтерÿ» пичетлесе кăларнă. Германин информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: «Ржевран кăнтăр-хĕвеланăç еннерехре Германи войскисем наступлени туни противникăн темиçе стрелковăй тата кавалери дивизийĕсене, танксен пĕр бригадине çавăрса илсе пĕтерсе тăкасси патне илсе çитерчĕ. Çак 11 кун хушши пынă çапăçу вăхăтĕнче 30.000 çынна тытса илнĕ, 218 танк, 591 оруди, 1.301 пулеметпа миномет тытса илнĕ», тесе пĕлтерет вăл.

Гитлер хăйĕн «специальнăй пĕлтерĕвĕсенче» ывăнма пĕлмесĕр тата тăтăшах суйнине Сов. Союзĕпе гитлерла Германи хушшинчи вăрçăн çулталăкĕ хыççăн пĕтĕм тĕнче курса ĕненчĕ пулин те, çапах та, ку хутра гитлеровецсем хăйсен виçене пĕлмесĕр суяс йăлипе рекорд турĕç темелле.

Июлĕн 2-мĕшĕпе 13-мĕш хушшинче Ржевран кăнтăр-хĕвеланăç еннерехре чăнах та çапăçусем пулса иртрĕç. Гитлерла войскăсем наступлени пуçласа ячĕç, пирĕн пĕр соединенине флангсенчен çавăрса илсе, вăл тылпа çыхăнса тăрассине татса тухма хăтланса пăхрĕç. Противникăн хисеп енĕпе йышлăрах тата танксем нумайрах пулса пынă войскисене хирĕç çапăçса, пирĕн чаçсем нимĕçсене чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿстернĕ хыççăн тата хăйсем те чылай çухатусем тунă хыççăн, оборонăн хăйсем йышăнса тăракан районне хăварса каялла чакрĕç. Çапăçу вăхăтĕнче пирĕн войскăсем вилнисемпе аманнисене шутласан 7.000 çын çухатнă, 5.000 çын пĕр хыпарсăр çухалнă, вĕсенчен чылай пысăк пайĕ противник тылĕнче кĕрешекен партизанла отрядсем туса хунă, 80 танк, 85 оруди, 200 пулемет пĕтнĕ.

Ржевран кăнтăр-хĕвеланăç еннерехре çапăçусен çак тапхăрĕ хушшинче нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 10.000 салтакпа офицер пĕтнĕ, 200 ытла танк, 70 ытла оруди, 250-ран кая мар пулеметпа миномет, 30 бронемашина тата 50 самолет пĕтнĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ фактсем.

Гитлерпа унăн хÿрешкисем вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен тата вĕсен результачĕсем çинчен тĕрлĕ суя хыпарсем пичетлесе кăларас тĕлĕшпе темĕнле тимлĕн тăрăшсан та, — Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕçсем кашни кунах пиншер те пиншер çынсене çухатнине яланах улталанипе пытарса хăварма çук. Çакă вара, нимĕç войскисен вăхăтлăха пулнă ăнăçăвĕсене пăхмасăр, гитлерла çар машинине майĕпенех хавшатса пырать тата Германи çак вăрçăра поражени тÿсессине хатĕрлет.

СОВИНФОРМБЮРО.

Физкультурниксен Пĕтĕм Союзри кунĕ умĕн

Июлĕн 19-мĕшĕнче физкультурниксен Пĕтĕм Союзри кунĕ пулать. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ хăйĕн вырăнти комитечĕсене тата физкультура организацийĕсене çав кун çĕршыври мĕнпур хуласемпе ялсенче физкультурниксен военизированнăй спорт ăмăртăвĕсене туса ирттерме кăтарту панă. Предприятисенче, фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекен рабочисен спартакиадисем пулса иртеççĕ. Вĕсен программинче—штык вĕççĕн тăрса çапăçасси, граната пăрахасси, пывра мĕнпур çар снаряженийĕпе ишесси, чăрмавсене çĕнтересси. Çав ăмăртусен тĕп задачи—всевобуч программине вĕреннĕ чухне туяннă пĕлÿсемпе хăнăхусене тепĕр хут тĕрĕслесе тухасси тата вĕсене çирĕплетсе хăварасси пулса тăрать.

Июлĕн 19-мĕш çитичченхи кунсенче физкультура организацийĕсем инструктор-общественниксене, ГТО значкисчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе, спорт обществисем госпитальсене шефа илес тĕлĕшпе (чиргсен сыватмалли физкультурăна организацилес, сывалакан боецсем валли спорт площадкисем тунă çĕрте пулăшас тĕлĕшпе) мĕнле ĕçленине пăхса тухаççĕ.

Пулас ăмăртусенче ГТО значокĕсем илмелли нормăсене массăллăн парас ĕç çине уйрăмах çавăрăнса пăхмалла. Совет Союзĕнчи 38 общество тăрăх кăна профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросĕ вăхăтĕнче çав значокăн нормисене 3 миллион çын ытла панă. Физкультурниксен нормăсем парас ĕçе çĕнĕрен çĕршер пин ĕççыннине явăçтармалла.

(ТАСС).

Мускав çыннисем оборона фондне 113 миллион тенкĕ ытла хывнă

Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшне çитиччен столицăри ĕççыннисем тăван çĕршыв оборонин фондне 4.896.000 тенкĕ хывнă. Кăçал паянхи куна çитиччен Мускав çыннисем оборона фондне пĕтĕмпе 113.033.000 тенкĕ панă. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Антон Матвеевич Матвеев юлташа Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Антон Матвеевич **Матвеев** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарь ĕçĕсене тăваканĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1942 çулти июлĕн 14-мĕш.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. В. Сомов юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен

Александр Васильевич **Сомов** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн ĕçĕсенчен хăтарас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарь ĕçĕсене тăваканĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1942 çулти июлĕн 14-мĕш.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. К. Дембицкий юлташа строительство материалĕсем тăвакан промышленноçăн Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленин начальникĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Антон Клементьевич Дембицкий юлташа строительство материалĕсем тăвакан промышленноçăн Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленин начальникĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Çăм парса татнă

СЕНТЕРВАРРИ. Юртакасси ялсоветне кĕрекен колхозсем, колхозниксемпе единоличниксем тата служащисем те 1942 çулшăн государствăна çăм памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕç.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Совет Союзĕпе Голланди хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусем тытасси çинчен тунă килĕшÿ

Июлĕн 10-мĕшĕнче Лондонра ССР Союзĕпе Голланди хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусем тытасси çинчен тунă килĕшĕве алă пуснă. СССР ячĕпе килĕшÿ çине — ССР Союзĕн Великобританири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ **И. М. Майский,** Голланди ячĕпе Голландин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн ĕçĕсене тăваканĕ **Г. М. Вердуйнен** алă пуснă.

Аяларахра килĕшĕвĕн текстне пичетлетпĕр:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Голландин Королевски Правительстви хушшинчи Килĕшÿ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Голландин Королевски Правительстви çакăн пек килĕшÿ тунă:

1. Икĕ çĕршывăн правительстви те дипломатиллĕ çыхăнусем тытма тата пĕр-пĕрин патне посланниксем яма килĕшнĕ.

2. Çак килĕшÿ ăна алă пуснă хыççăн çийĕнчех вăя кĕрет тата ăна ратификацилеме кирлĕ мар.

3. Çак килĕшĕве икĕ экземпляр, вырăс тата Голланди чĕлхисемпе, тунă. Икĕ текстчĕ те пĕр пекех вăйра пулаççĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Великобританири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ МАЙСКИЙ.

Голландин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн ĕçĕсене тăваканĕ
ВЕРДУЙНЕН.

Лондон, 1942 çулти июлĕн 10-мĕш.

РЕСПУБЛИКĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

Утă çулассипе силос хывас ĕçсем юлса пыраççĕ

(Чăваш АССР Наркомземĕн сводки тăрăх)

Тырпул пухса кĕртме тытăнмалли хĕрӳ вăхăт çывхарса килет. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕресси тата хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленийĕнче колхозсене утă çулас программа парать. [illegible]

Анчах утă çулса пуçтарассипе силос хывас ĕçсем республикăри [illegible] июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне республикăра утă çулассине 33,9 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. [illegible]

Улăх утă çулмалли плана Куславкка районĕ июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне 5 процент, Октябрьски — 10,6 процент, Çĕрпӳ — 11,5 процент, Ишлей — 13,4 процент, Советски — 14,3 процент, Шупашкар районĕ 15,3 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Утă çулас ĕçре çак районсем ыттисенчен аванрах ĕçлеççĕ: Вăрмар районĕ утă çулас плана 85,7 процент тултарнă, Элĕк — 78,5 процент, Çĕмĕрле — 72,6 процент, Тăвай — 71,4 процент, Патăрьел — 68,2 процент тултарнă. [illegible]

[illegible] ВКП(б) Чăваш Обкомĕ [illegible] июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне [illegible] Шăмăршă районĕнче 4.000 тонна [illegible] Вăрмар районĕ 3.800 [illegible] Элĕк районĕ 4.300 тонна [illegible] — 64 тонна кăна хывнă.

[illegible] Сĕнтĕрвăрри (69,1 процент), Шупашкар (67,1 процент) тата Çĕмĕрле (66,4 процент) районĕсем кăна [illegible]

Пĕтĕмпе илсен, утă çулса пуçтарассипе силос хывас ĕçсем [illegible]

Чăваш АССР Наркомземĕн кая юлакан районсем [illegible] мобилизацилемелле.

Тырпулсене пухса кĕрес ĕçе хатĕрленсе çитнĕ

КАЛИНИНО, июлĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Уйхас Юнтапари «Çĕнĕ пурнăç» колхоз (председателĕ Д. Угинева юлташ) 1942 çулти тырпула пухса кĕртме пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ. Кашни бригада валлиех пĕрер жнейка юсаса хунă, кĕреплелĕ çавасем хатĕрленĕ. Жнейкăсемпе ĕçлеме, кĕреплелĕ çавасемпе çулма колхозниксене уйăрса çирĕплетнĕ, ĕçе вĕрентнĕ. Ксения Захарова, А. Алексеев, С. Ильин колхозниксем тырра жнейкăсемпе вырма хатĕрленеççĕ. Вĕсем жнейкăсен пайĕсене [illegible] вĕренсе çитнĕ.

Кашни бригада валли 15 урапа çирĕплетнĕ. Уборка вăхăтĕнче уя шыв турттарма çынсем уйăрнă. Колхозниксем тĕштырăсене 15 кун хушшинче пухса кĕртме, ăна çийĕнчех капана хывса пыма тата çийĕнчех çапма тытăнма хатĕрленеççĕ. Колхозăн витнĕ итемсем виççĕ. Вĕсене пурне те касса тасатнă, итемсем çине веялкăсемпе сортировкăсене тата триера вырнаçтарса лартнă.

Г. МАТВЕЕВ.

Силос хыврĕç

ЧКАЛОВСКОЕ, июлĕн 14-мĕш. (Хамăр корр.). ВЛКСМ Обкомĕ йышăннă тăрăх, республикăри районсенче вылăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат хатĕрлес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен çирĕммуникĕ пулса иртрĕ. Çак çирĕм кун хушшинче комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем силос хывас ĕçре колхозсене вăйлăн пулăшрĕç. Вĕсем пулăшнипе паянхи куна районра 1131 тонна силос хывнă.

«Пламя Октября», «Хĕрлĕ ялав» колхозсем силос хывас ĕçĕн çулталăкри планне пĕтĕмĕшпех тултарнă. «Пламя Октября» колхозра комсомолецсемпе çамрăксене комсомол пуçламăш организацийĕн секретарĕ А. Есакова юлташ пултарулăн ертсе пырать. Паянхи куна колхоз пурĕ 120 тонна силос хывнă. Çавăн пекех Чкалов ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем те хастарлă ĕçлеççĕ. Вĕсем паянхи куна 122 тонна силос хывнă.

Районра силос хывас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен 17 бригади ĕçлет. Вĕсене комсомолецсем ертсе пыраççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Государствăна 330 пăт утă панă

ШĂХАСАН, июлĕн 14-мĕш. (Хамăр корр.). Вагильдинори «Активист» колхоз паян районсенчи колхозсенчен чи малтан Канашри хатĕрлев конторин пунктне 330 пăт утă леçсе панă. Колхоз паянхи куна 45 гектар çинчи утта тата 22 гектар çинчи клевера çулса пуçтарса капансене хывнă. Колхозниксем государствăна чи паха утă пама тăрăшаççĕ, утă памалли обязательствăна вĕсем çийĕнчех татаççĕ.

Утă çулнă вăхăтра Васса Филиппова, А. Григорьева, Е. Алексеева колхозницăсем ĕç нормине тăтăшах 200 процент тултарса ĕçлерĕç.

Тырпула тля ятлă хурт-кăпшанкăран сыхлар

Тля ятлă сиенлĕ хурт-кăпшанкă пăрçа йышши тырăсене пысăк сиен кӳрет. Вăл сиенлĕ хурт-кăпшанка калăх хушшинче пăрçа пылти тесе ят панă. Хăйĕн сиенлĕхĕпе ку ят ăна тĕл килсе тухать те.

Тля тырпула, уйрăмах пăрçа йышши тырăсенче ĕрчесен, 3—4 кун хушшинчех пысăк сиен кӳме пултарать. 1932 çулта, тĕслĕхрен, Елчĕк, Шăмăршă, Комсомольски, Чкаловски тата Первомайски районсенче çак хурт-кăпшанкă вăйлăн сарăлнине пула чылай колхозсенче пăрçа пачах та пулман. Çакăн пек тĕслĕхех 1937 çулта Канаш, Тăвай, Йĕпреç районĕсенче пулнă. Тля сиенлĕнĕ пирки, хутăçа ларнă пăрçаран кăмăлĕ çеç юлнă.

Пирĕн республикăри уйхирсенче тля вăхăтĕ-вăхăтĕпе сарăлнине сăнанă. Тăтăшах çумăр çуса тăни тата çумăр хыççăн тĕвеллĕ ăшă çанталăк тăни ăна массăллăн ĕрчеме лайăх май туса парать. Тля пăрçа хăмăлĕн тăрринче вăл çурăлтса çеçкене ларнă вăхăтра йышлăн ĕрчесен, пăрçа пулмасть вара. Пăрçа хăмăлĕн çӳлти çулçисен тӳнтер енче пухăнса вĕсем пăрçан сĕткенне ĕçеççĕ, çапла пăрçа чечеке лармасăрах та пĕтме пултарать.

Кăçал, пĕтĕм ĕçхалăхĕ гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра, колхозсен пысăк тухăçлă тырпул туса илмелле. Çавăнпа тырпулсене тĕрлĕрен сиенлĕхсенчен упраса ӳстересси уйрăмах малти вырăнта тăракан ĕç пулса тăрать.

Тляна хирĕç кĕрешмелли майсем нумай. Вăл майсемпе усă курса, пирĕн колхозсем кăçал хăйсен уйхирĕсенче çак сиенлĕ хурт-кăпшанка ĕрчеме май памалла мар. Пăрçа калчисене пăхса тухса, тля ĕрченĕ вырăнсене халех дезинфекцилемелле. Çакна асăрхамалла: тля пăрçана сырăнса илсен 3—4 кун хушшинчех пĕтерсе тăкма пултарать. Çавăнпа унпала кĕрешессине те хăвăрт туса ирттермелле, сиенлĕхе вăхăтра сирсе ямалла.

Тляна çак майсемпе пĕтермелле.

Кашни 10 литр шыв çине 15 грамм анабазин-сульфат текен эмел тата 60 грамм супăнь ярса ирĕлтермелле. Вăл шыва пăрçа хăмăлĕ çине сирпĕтмелле. Анабазин-сульфат çук пулсан, кирек епле супăнь шывне те сирпĕтме юрать. Анчах супăне хăйне çеç ирĕлтерсе тунă шыва уяр ăшă çанталăкра сирпĕтсен, вăл пăрçан çулçисене çыпăçтарса лартма пултарать. Çавăнпа ăна нӳрĕрех çанталăкра сирпĕтес пулать. Супăнь шывĕ çине анабазин хутăштарсан, ăна пăрçа хăмăлĕ çине кирек мĕнле çанталăкра та сирпĕтме юрать.

Çак асăннă майсемсĕр пуçне тата пăрçа калчисене пилĕк процентлă анабадуст е никодуст текен эмельсемпе тусанлантарни те тляна хирĕç кĕрешме питĕ усăллă. Анабадустпа никодуст — порошок евĕрлĕ эмелсем. Колхозсенче вĕсене тусанлантармалли аппаратсем çитмеççĕ пулсан, вĕсене шăлапиртен çĕленĕ михĕсем витĕр те тусанлантарма юрать.

Анабадуст текен эмеле колхозниксем хăйсемех тума пултараççĕ. Унта 95 пай сӳнтернĕ известь, 5 пай анабазин кĕрет. Известь çук пулсан, ун вырăнне пурă илме пулать, пурă та çителĕклĕ тăран çук пулсан, ала витĕр кăларса тасатнă çул çинчи тусанпа усă курма пулать. Çапла тунă анабадуст эмеле кашни гектар çине 45—50 килограмм сирпĕтмелле.

Тляна хирĕç махорка шывĕпе те кĕрешме пулать. Махорка тусанĕ, çулçи е тата туни çине кашни 400—500 грамм пуçне 10 литр шыв ярса, 20—30 градусран кая мар ăшă вырăнта пĕр талăк хушши тытмалла. Унтан шыва махоркăран уйăрса, пăрçа хăмăлĕ çине сирпĕтмелле. Махорка тусанне кĕлпе хутăштарса тусанлантарма та юрать.

Пирĕн колхозсен уйхирĕсенче, ытти тырăсем пекех, пăрçа-ясмăк та вăйлăн ӳсет. Пысăк тухăçлă тырпул туса илмешкĕн тырăсене сиенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен упраса тăрас пулать.

Т. НИКИТИН.

Чăваш АССР Наркомземĕн агрономĕ.

Стахановецсен йышĕ ӳсет

Буинскри (Йĕпреç р.) йывăç касакалакан заводра социализмла ăмăрту вăйланса пырать. Çавна пула стахановецсен йышĕ те ӳсет. Катка-пичке тăвакан цехри рабочи Лаврентий Попов нормăна 270 процент таран тултарса ĕçлет. Михаил Лазарев июнь уйăхĕнчи заданине 150 процент тултарчĕ. Стахановла ĕçлекенсем заводра вуншар çын шутланаççĕ.

И. МИТЯСЬ.

ХĔРЛĔ ÇАР ВАЛЛИ ĂШĂ ТУМТИРСЕМ

ВĂРМАР. (Телефонпа). Районри коммунистсем, комсомолецсем, партире тăман агитаторсем Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухасси çинчен ĕççынисене ăнлантарса параççĕ. Ăшă тумтирсем парас тĕлĕшпе вĕсем ытти çынсене пример кăтартаççĕ, чи малтан • хăйсем параççĕ. Çак ĕç уйрăмах Чупайри, Çĕнĕ Мăрапри колхозсенче ăнăçлăн пулса пырать.

Июнĕн 10-мĕш тĕлне районĕпе 224 килограмм çăм, 619 сурăх тирĕ, 15 çĕлĕк, 35 кĕске кĕрĕк, 21 мăшăр çăмата, 84 мăшăр çăм алшиш, 47 мăшăр çăм чăлха, 86 алшăлли, 61 мăшăр пир тăла, 15 мăшăр ăшă алса пухăнчĕ.

Г. КРЮЧКОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

ÇĔРПУ. Пысăк Чăрăш ялсоветне кĕрекен Жданов ячĕпе тăракан «Заря» тата «Пучах» колхозсенче самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума укçа пухас ĕç анлăн сарăлса пырать. Июлĕн 11-мĕш тĕлне ку колхозсенче самолетсен звенине тума 2.400 тенкĕ укçа пухнă. Укçа пухас ĕç малалла та пырать.

М. ЯКОВЛЕВ.

* * *

ЕЛЧĔК. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звени валли 2.000 тенкĕ, «Молот» колхозри колхозниксем—1.800 тенкĕ, «Путь Ленина» колхоз членĕсем —1.400 тенкĕ пухса, Госбанк отделенине пырса хыврĕç.

И. СКОБЕЛЕВ.

ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАÇÇĔ

КАНАШ. Колхозсенче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Кашни колхозникпе колхозница çак вăхăтра фронт ыйтнă пек ĕçлеме тăрăшать. Сталин юлташăн май уйăхĕнчи приказне кулленхи тимлĕ ĕçпе пурнăçласа пырать.

Районри колхозсем июнĕн 1-мĕш тĕлне государствăна 1942 çулхи обязательство шучĕпе срокчен çĕршер центнер тĕштырă пачĕç. «Хĕрлĕ Çар», Куйбышев, Чапаев, Киров ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна аш-какай, çăмарта парас обязательствăсене срокчен парса татнă.

Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обязательствăсене тыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Çак кунсенче колхозницăсем тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатса пĕтерчĕç, халĕ пахча-çимĕçсене çумкурăкĕсенчен тасатаççĕ. Колхоз тырăсене пухса кĕртес ĕçе тимлĕн хатĕрленет. Жнейкăсемпе транспорт инвентарĕсене юсас ĕç вĕçленсе пырать.

Ф. МАЛЫШКИН.

* * *

КАЛИНИНО. Шнаксасинчи «Броневик» колхоз çак кунсенче государствăна 1942 çулти обязательство шучĕпе 79 центнер ыраш пачĕ. Çапла колхоз 1942 çулта ыраш памалли обязательствăна пĕтĕмĕшпех тултарчĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

Англи самолечĕсем Данцигпа Булонь çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: июлĕн 12-мĕшĕнче каçхине «Бостон» йышши бомбардировщик, истребительсен темиçе эскадрильи хӳтĕлесе пынипе, Германин Абвиль çывăхĕнчи аэродромне атакăланă. Англин пур самолечĕсем те хăйсен базисене таврăннă.

Кăнтăрла противникăн икĕ самолечĕ Англин кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕнчи пĕр пункт çине бомбăсем пăрахнă. Виллисем йышлă мар.

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 11-мĕшĕнче Англин «Ленкастер» йышши бомбардировщикĕсен темиçе эскадрильи Данцигри пысăк верфь çине вĕçсе пырса тапăннă; çав верфьре подводнăй лодкăсем тăваççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: июлĕн 13-мĕшĕнче кăнтăрла «Бостон» йышши бомбардировщиксем, «Спитфайр» йышши йышлă истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Булоньри сортировка станцине атакăланă. «Спитфайр» истребительсен ытти соединенийĕсем Абвиль районĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

Египетри çапăçусем

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Англи войскисем хĕвеланăçĕнелле Тель-эль-Эйза районĕ патнелле куçса пынă чухне июлĕн 11-мĕшĕнче 2000 çынна ытла тыткăна илнĕ. Тăшманăн 18 танкне пĕтерсе тăкнă. Фронтăн вăтаçĕрĕнчи участокĕнче противникăн танкĕсем Англин бронетанковăй колоннисене тата артиллерине хирĕç çапăçма тытăннă.

Çăмăл бомбардировщиксем Мерса-Матрухра противникăн танкĕсем пухăнса тăнă вырăн çине тата противникăн суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă, вĕсем тăватă сехет те пынă. Тобрукпа Мерса-Матрух хушшинче Англи истребителĕсем противникăн виçĕ самолетне персе ӳкернĕ, нумай самолетне сиенленĕ. Ывăр бомбардировщиксем Бенгази çине ăнăçлăн вĕçсе пырса тапăннă, хăшпĕр бомбăсем тӳрех суднăсем çине ӳкни палăрнă.

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Англи войскисем противникăн атакине сирсе янă; противник фронтăн çурçĕр секторĕнчи çурçĕр-хĕвеланăç районĕнче англичансем юлашки хутĕнче йышăннă позицисене тытса илесшĕн пулнă. Англи артиллерийĕ Эль-Аламейн районĕнче тата вăтаçĕрти секторта активлăн çапăçнă. Кăнтăрти секторта англичансен малти чаçĕсемпе артиллерийĕ противника çаплах пыра-пыра кансĕрленĕ.

Тинĕс çинчи вăрçă

ВАШИНГТОН, июлĕн 12-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем официальнăй пĕлтерӳсем тăрăх çапла калаççĕ: декабрĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа (Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăрçа хутшăннăранпа) Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕвелтухăç çыранĕ патĕнче 146 парохода путарнă.

Америка çарĕн сигнальнăй службин начальникĕ Лондона пынă

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондона Америка çарĕн сигнальнăй службин начальникĕ генерал-майор Олмстид пынă.

Югослави партизанĕсемпе оккупантсем хушшинчи хаяр çапăçу

СТАМБУЛ, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Стамбулран илнĕ хыпарсем тăрăх, Боснире июлĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласа Югослави партизанĕсемпе Итали войскисем хушшинче хаяр çапăçусем сарăлса кайнă. Италин официальнăй йĕркепе паракан çар сводкисенче çакна йышăнаççĕ: Итали командованийĕн партизансене хирĕç итальянецсен иккĕмĕш армине ирĕксĕрех çапăçăва кĕртсе яма лекнĕ. Çавăн пекех тата Итали войскисем чылай пысăк çухатусем тӳсни çинчен те пĕлтереççĕ. Вăрçă ĕçĕсене Итали авиацийĕ хутшăнать. Çак кунсенче Хорватин правителĕ Павелич коммюнике пичетлесе кăларнă: унăн отрячĕсем çурçĕр Боснире партизансен чаçĕсене хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ, тесе йышăннă вăл çав коммюникере. Партизансем Павеличăн бандисене Прибой районĕнче аркатмаллах пырса çапнă. Çапăçусем пĕтĕм Боснире малалла пулса пыраççĕ.

Бельги шахтерĕсем хушшинчи пăлхавсем

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Бельгин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Отражри (Бельгия) çĕркăмрăк шахтисенче шахтерсем забастовка тунă. Забастовкăсемпе пăлхавсем, Германие хирĕç пулса пынăскерсем, Тертрипе Кереньонри çĕркăмрăк шахтисенче те сарăлнă. Германи полицийĕ забастовка организаторĕсене шырама тытăннипе рабочисене хăратма хăтланнă. Анчах та вăл çав организаторсене тупайман.

Выçлăхпа чухăнлăх тата вилĕм режимĕ

Гитлеровецсем Польшăра хуçаланни

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат М. докторпа каласнине пичетлесе кăларнă. Вăл Польшăри вăрттăн ĕçлекен ушкăнсен руководителĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл нумаях пулмасть Англие тарса пынă.

«Польшăра, — тенĕ вăл, — халăхи вăхăтра выçлăхпа чухăнлăх, вилĕмпе террор пуç пулса тăраççĕ. Варшавăра икĕ урам кĕтессинчи тротуар çинче 9 çын выçăпа асапланса вилнине эпĕ хам куçпа куртăм. Вĕсен йĕри-тавра выçăпа типсе хăрнă ачасен пысăк мар ушкăнĕ шавласа тăратчĕ. Çав ачасем çынсем вилессине кăна кĕтсе тăраççĕ пулас, лешсем вилсен вара ачасем вĕсен тумтирĕсене, пуринчен ытларах ботинкисене, хывса илме ĕмĕтленеççĕ. Ботинкăсем тупсан — вара халех укçа та, çимелли те тупăнать. Анчах ачасем Польшăра ботинкăсем хыççăн кăна мар йĕрлеççĕ, вĕсем нимĕç салтакĕсен сăмси айĕнченех сăкăр, çĕрулми турта-турта илсе каяççĕ те çав çимĕçсене ытти ачасемпе çитĕннĕ çынсене параççĕ. Хăйсем пĕтессинчен хăрамасăрах, вĕсем çимелли шыраса ялсем тăрăх чупса çӳреççĕ. Çавăн пек çӳрекен ачасем пысăк çар пулса тăраççĕ, вĕсем апат-çимĕç кăна мар шыраççĕ, çакăнпа пĕрлех вĕсем тата ютçĕршывсенчен панă юлашки радиохыпарсене, вăрттăн туха тăракан хаçатсене, кĕтесрен кĕтесе çӳрекен сас-хурана сараççĕ, нумайĕшĕсем çакăншăн хăйсен пурнăçĕпе тӳлеççĕ. Пĕринче эпĕ çав ачасенчен пĕри, вăрттăн тухакан хаçатсене сараканскер, юн ăшĕнче выртнине куртăм. Ăна нимĕç полицейскийĕ персе пăрахнă. Эпĕ ун патне пĕшкĕнтĕм те унăн куçĕсене уçрăм. Вăл чĕрĕччĕ-ха, мана та палласа илчĕ, вăл хăйĕн аллинче манăн темиçе хаçата чăмăртаса выртатчĕ. Польшăра хаçатсем çӳретекен пĕчĕк ачасем халĕ фронтри связистсем вырăнĕнче ĕçлеççĕ».

Францин нацилпĕ комитечĕ Франци халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Июлĕн 14-мĕш кунне, Бастилие илнĕ куна (вăл кун Францин нацилĕ праздникĕ шутланать) уявласа ирттернĕ май Францин Лондонра ĕçлекен нациллĕ комитечĕ Франци халăхне чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Çав чĕнсе каланинче «çак праздникe халăхи условисенче уявласа ирттерни уйрăмах паха пулса тăрать. Мĕнпур француз патриочĕсемпĕн те çав праздник вăл тăван çĕршыва ирĕке кăларма çĕнĕрен тупа туни пулать», тесе кăтартса панă.

Чĕнсе каланинче çапла каланă: çĕршыва ирĕке кăларас тени вăл, чи малтан, нимĕç завоевателĕн пусмăрĕнчен çăлас тени тата Франци халăхне униăн ют пулса тăракан режима, унăн пĕтĕм нациллĕ йăлисене хирĕç пыракан режима, Францире тăшманăн штыкĕсем пулăшнипе çеç çирĕпленсе ларнă режима ирĕксĕр йышăнтарнă çынсенчен çăлас тени пулать, тенĕ.

Нациллĕ комитет Францин мĕнпур паттăрлă ывăлĕсене — салтаксене, моряксене, летчиксене, ютçĕршывсенче пурăнакан мĕнпур французсене, çĕршыва тăшмана тата унăн пайккисене пыра-пыра çапакан мĕнпур геройсене, Германин çар машинине хавшатса пырса алла хĕçпăшал тытма хатĕрленекенскерсене пĕрлешме тата кĕрешме чĕнет. «Июлĕн 14-мĕшĕ — тенĕ, чĕнсе каланинче, — Францин, асап тӳсекен, анчах та кĕрешекен, шанчăка çухатман тата çиеле тухас Францин праздникĕ пулса тăрĕ».

ЖЕНЕВА, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Виши правительстви июлĕн 14-мĕшĕнче нимĕнле уяв туса ирттерме те чарнă.

Пионер лагерĕнче

Аслă вăрман варрипе Сăрă шывĕ юхса выртать. Шывăн сулахай енче пысăк çурт. Вăл инçетренех илемлĕн курăнать. Унăн çийĕнче пысăк хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

Илемлĕ вырăн. Унта халĕ пионерсен лагерĕ. Унта вĕренӳ отличникĕсем канаççĕ.

Ирхине, хĕвел тухса сарăлсан, горн сасси янраса каять. Хĕрлĕ галстуклă ачасем аслă çурт çумĕнчи уçланка тухаççĕ. Физзарядка пулать. Унтан линейкăна тухаççĕ.

Кăнтăрла ачасем ЮПВХО, БГСО значокĕсен нормисене пама вĕренеççĕ, лодкăпа ярăнма каяççĕ е тата вăйăсем выляççĕ, экскурсисене çӳреççĕ.

Акă паян шăп 10 сехетре ЮПВХО тата БГСО кружокĕсенче занятисем пуçланчĕç. Занятисем икĕ отрядĕнче те организованно иртрĕç. Унтан 11 сехетре лодкăсемпе ярăнма кайрĕç. Шăп пĕр сехет çӳрерĕç вĕсем шыв çинче ярăнса. Хăйсемпе пĕрлех вĕсен гармонист те пур. Купăс сассипе ачасем юрă шăрантараççĕ.

Кăнтăрлахи апат хыççăн 1-мĕш отрядри пионерсем сăрт леш енне экскурсие кайрĕç, 2-мĕш отряд БГСО значокĕн нормине пачĕ. Çак вăхăтра тата 10 ача костер хума хатĕрленчĕç.

Каçхине, апат çинĕ хыççăн, шăп 8 сехетре костер пуçланчĕ. Малтанах воспитатель лагерьте канакан ачасем патне отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнчен капитан Василий Лепаев янă çырăва вуларĕç. Капитан ачасене лайăх канни хыççăн отлично вĕренме тата аслисене ĕçре пулăшса пыма чĕннине пурте хавассăн итлерĕç.

Унтан Илюша Петров, Рая Антонова, Саша Романовский вырăс ташшине пысăк мастерлăхпа ташласа кăтартрĕç, Вера Косточкина Сталин юлташ çинчен хунă юрра юрласа пачĕ. Вĕсене ачасем тăвăллăн алă çупрĕç. Унтан массăллă юрăсемпе ташăсем, вăйăсем пулчĕç.

Çĕмĕрле районĕнчи пионерсен лагерĕнче кăçал 150 ачана яхăн канмалла. Пĕрремĕш черетре 72 ача пулчĕ. Çак кунсенче кунта иккĕмĕш черетрисем канма пухăнчĕç.

Пĕррремĕш черетре пулнисенчен пурте тенĕ пекех ЮПВХО тата БГСО значокĕсен нормисене панă. Вĕсем тĕрлĕрен эмел курăкĕсем 2.500 килограмм пухса типĕтнĕ.

Х. ЛИСИН.

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.).

ШКУЛ АЧИСЕМ КОЛХОЗ УЙХИРĔНЧЕ

СĔНТЕРВĂРРИ. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ хыççăн Шуркассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем Киров ячĕпе тăракан колхозра ĕçлеме пуçларĕç. Улттăмĕш класра вĕренекен А. Яковлев лашасем пăхать. Вĕренекенсем тислĕк тăкнă çĕрте, çум çумланă çĕрте тата пахча-çимĕç тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Исаково ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозра шкул ачисем ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕренпе колхоз ĕçĕнче ĕçлесе, Е. Федорова — 21 ĕçкунĕ, Т. Ефремова—25, А. Кошкина — 16, Андриянова — 15 ĕçкунĕ тунă. Вунпĕр çулхи Л. Иванов çĕртме сӳри сӳрелет.

Шкул ачисем колхозра ĕçлесе 75-шер ĕçкунĕнчен кая мар тума йышăнчĕç.

И. АРХИПОВ.

Выльăхсем валли витесем тăваççĕ

КАНАШ, июлĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Çак кунсенче «Красная Чувашия» колхоз 250 чăх-чĕп вырнаçтармалăх çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз улăмпа тăмран 40 ĕне вырнаçтармалăх, «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз 400 чăх вырнаçтармалăх витесем туса лартрĕç.

Ф. МАЛЫШКИН.

ПĔЛТЕРУ

Июлĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 9 сехетре, парткабинетра (Чувашская урам, 6-мĕш çурт, 2-мĕш хутĕнче) стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулать.

Кун йĕркинче çак ыйту тăрать:

«Пичетĕн социализмлă ăмăртури задачисем».

Канашлу усăлнă тĕле чи лайăх стена хаçачĕсен выставки организациленет.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ «Красная Чувашия» тата «Чăваш Коммуни» редакцийĕсем.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашскому радиокомитету требуется квалифицированный диктор на чувашском языке для утренних и вечерних радиопередач. Оплата по соглашению.

Обращаться в любое время по телефонам №№ 2—60, 6—44, 4—11, 6—04 и 5—44.

2—2.

Чебоксарскому пивзаводу требуются рабочие: 1) сушильщицы по сушке сухарей, 2) разливальщицы, 3) солодовщицы.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Ленинградская ул., 35, Пивзавод.

3—2.

РАЗЫСКИВАЕМ ЛОШАДЬ

Приметы: кобыла, 1939 года рождения, темно-серой масти.

Знающих о местонахождении просьба сообщить по адресу: г. Чебоксары, бюро пропусков НКВД ЧАССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 551 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.